26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ЯНВАРЬ 19 ЮНКУН 14(6509) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Советĕнче

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ. тракторсене юсамалли плана 1943 çулхи IV-мĕш кварталта та декабрь уйăхĕнче мĕнле пурнăçа кĕртнин итогĕсене пăхса тухса, çапла йышăннă:

1. 1943 çулти IV-мĕш кварталта тата декабрь уйăхĕнче МТС-сен тата совхозсен тракторĕсене юсамалли плана лайăх пурнăçланăшăн Мускав облаçне, Украина ССР-ĕнчи Ворошиловград облаçне, Ярославль облаçне, Новосибирск облаçне тата Алтай крайне Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата тракторсем юсанă çĕрте палăрнă работниксене премилеме 300.000-шер тенкĕ укçа памалла тăвас.

2. 1943 çулăн IV-мĕш кварталĕнче тата декабрь уйăхĕнче тракторсене юсамалли плана çак облаçсемпе республикăсем пурнăçа кĕртнипе палăртас:

Ленинград, Свердловск, Иваново, Тула, Калинино, Киров, Молотов, Кемерово, Сталинск, Харьков, Днепропетровск, Кустанай, Çурçĕр Казахстан, Караганда, Акмолинск, Архангельск, Горьки, Вологда, Курск облаçĕсем, Армян ССР-ĕ, Карело-Фин ССР-ĕ, Коми, Чăваш, Бурят-Монгол, Якут, Мари, Мордва тата Дагестан АССР-ĕсем.

Комсомолăн вăйĕ — большевиксен партийĕ ертсе пынинче

Ленинла-Сталинла комсомол большевиксен партийĕ ертсе пынипе ӳссе çитĕнчĕ. Халĕ, отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, комсомол хăйĕн мухтавлă чысне татах та ытларах çĕклерĕ. Вăл партин шанчăклă резерви пулса тăнине кĕрешӳпе ĕçре кăтартса парать. Çамрăк патриотсем отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче те, тылра та мухтава тивĕçлĕ ĕçсем тăваççĕ.

Комсомолăн вăйĕпе хăвачĕн пĕтĕм çăлкуçĕ вăл — комсомола большевиксен партийĕ ертсе пынинче пулать. Пирĕн парти çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе ялан пысăк вырăна хурать. ВКП(б) уставĕ комсомол организацийĕсене, парти организацийĕсем çук çĕрте, предприятисен, колхозсен, совхозсен тата учрежденисен ĕçĕнчи ҫитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе пĕтĕм ыйтусене сӳтсе явма тата вăл ыйтусене парти организацийĕсем умне кăларса тăратма ирĕк парать. Комсомол организацийĕсем халăх хуçалăхĕн пур отраçлисенче те парти директивĕсене активлăн пурнăçа кĕртекенсем пулса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра промышленность предприятийĕсенче те, ялхуçалăхĕнче те çамрăксем тĕп вăй пулса тăраççĕ. Промышленноçпа ялхуçалăхĕ фронтпа çĕршыв ыйтăвĕсене ăнăçлăн тивĕçтерсе пырасси çамрăксен ĕçĕнчен нумай килет. Çавна май комсомол умĕнче тăракан задачăсем те пысăкланчĕç, çав вăхăтрах комсомол ретĕнче опытлă работниксем сахалланчĕç. Çавăнпа та халь парти организацийĕсен комсомола ертсе пырас ĕç çине нихăçанхинчен те ытларах çавăрăнса пăхмалла, вăл ĕçе вăрçă условисене тивĕçлĕ организацилемелле.

Комсомола большевикла ертсе пырас тени вăл, чăн малтанах, комсомол организацийĕсенче воспитани ĕçне лайăхлатассине, çамрăк ăрăва политикăлла ĕçре вĕрентессине пĕлтерет. Ку енĕпе парти организацийĕсен пуян опыт пур. Нумай парторганизацисем вăл ĕçе чăн та тивĕçлипе туса пыраççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕнче—çурри ытла çамрăксем. Çавăнпа заводри парторганизаци хăйĕн ĕçĕнче çамрăксене воспитани парассине пысăк вырăна хурать. Парторганизаци комсомолецсен пуçарăвĕсене çийĕнчех палăртса, пĕтĕм коллективра сарма тăрăшать, çамрăксене завод умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме мобилизацилес ĕçре тĕрлĕ майсемпе усă курать. Çамрăксен фронтовой бригадисем, художествăлла пултарулăх кружокĕсем, физкультурăпа çар ĕçне вĕренни, ватă рабочисем çамрăксене шефа илни, лекцисемпе докладсем тăтăшах ирттерни,—çаксем ĕнтĕ кунта ĕç ăнăçлăхне татса параççĕ. Çавăнпа унта çамрăксем производствăра малти ретре пыраççĕ. Завод коллективĕ саккăрмĕш уйăх ĕнтĕ Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăй аллинче тытса тăрать.

Хăйсен ĕçне большевикла йĕркелесе пыракан комсомол организацийĕсем транспортра та, промысла кооперацийĕнче те, колхозсенче те сахал мар. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри организацинче 40 комсомолеца яхăн шутланать. Вĕсем çамрăксене вăйлă тыр пулăшăн кĕрешме мобилизацилекенсем пулса тăраççĕ. Çапла, сăмахран, комсомолка Миронова ертсе пыракан бригада иртнĕ çул малти вырăна тухса, колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илме тивĕçлĕ пулнă. Халĕ çуракине хатĕрленнĕ вăхăтра та унăн бригади малта пырать. Кун пек тĕслĕхсем татах та нумай.

Аçта ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем тата пуçламĕш парторганизацисем комсомол организацийĕсене кулленхи практикăлла ĕçре вĕрентсе, пулăшса пыраççĕ, çавăнта комсомолецсем чăннипех ĕç организаторĕсем, партин шанчăклă помощникĕсем пулса тăраççĕ. Анчах та партин хăшпĕр организацийĕсем çакна тивĕçлипе шута илмеççĕ-ха. Предприятисенче чылай чухне çакăн пек пулать: комсомолецсем лайăх ĕçлеççĕ, анчах та комсомол организацийĕ кирлĕ ыйтусене татса панă çĕре хутшăнмасть. Ку вăл парторганизаци комсомол умне уйрăм задачăсем лартманнинчен килет. Çавăнпа комсомолецсен пухăвĕсенче производствăри ыйтусене сайра хутра кăна сӳтсе яваççĕ. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем комсомол организацийĕсене уйрăм ĕçсем хушнине питех те сахал тĕл пулаттăр.

Нумай колхозсенче парторганизацисем çук. Çав колхозсенчи комсомол организацийĕсем партипе правительствăн постановленийĕсене пурнăçа кĕртсе пырассишĕн сăвăтлă пулса тăраççĕ. ВКП(б) райкомĕсен комсомолăн ялсенчи организацийĕсене куллен ертсе, пулăшса пымалла. Анчах хăшпĕр парторганизацисем ку ĕç çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ-ха.

Парторганизацисем чылайĕшĕ комсомол организацисен йышне ӳстерессишĕн, комсомол организацийĕсене тĕреклетессишĕн кирлĕ пек ĕçлемеççĕ. Комсомолăн нумай колхозсенчи организацийĕсенче 5—6 комсомолец кăна тăраççĕ. Ун пек фактсем Ишлей районĕнчи колхозсенче ытларах.

Хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем комсомол ĕçĕпе пачах та интересленмеççĕ. Шăхасан районĕнчи «Герой» колхозри комсомолецсем çуракине хатĕрленес ĕçе кирлĕ пек хутшăнса ĕçлемеççĕ. Анчах та вăл колхозри парторганизаци комсомолецсен ĕçĕпе пачах та интересленмест. Комсомолецсен ĕçĕсем çинчен коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе явман. Парторганизаци секретарĕ комсомол организаци секретарĕ пулса кам ĕçленине те пĕлмест.

Парторганизацисен ялти комсомолецсене çуракине большевикла хатĕрленсе ирттерме организацилес пулать. Кашни комсомолец çуракине хатĕрленес ĕçре хăйĕн пултарулăхне кăтартса, активлăн ĕçлетĕр.

Парторганизацисен комсомола пултарулă кадрсем парса пулăшмалла. Парторганизаци секретарĕсен комсомол работникĕсене пухусенче мĕнле ыйтусем лартмаллине, комсомолра тăман çамрăксем хушшинче мĕнле ĕçлемеллине вĕрентсе пымалла. Комсомол организацийĕсен руководителĕсен пĕлӳлĕхне, тавракурăмлăхне куллен ӳстерсе пымалла. Комсомолецсен хулари тата районсенчи актив пухăвĕсене ирттерес пулать. Кашни коммунист комсомол ĕçне активлăн хутшăнса ĕçлеме тивĕçлĕ.

Комсомолецсем культура ĕçĕсен организаторĕсем пулмалла. Парторганизацисен комсомола çак ĕçре те тивĕçлĕ пулăшу памалла. Комсомолецсемпе çамрăксем валли лекцисемпе докладсем, семинарсем ирттермелле, физкультурăпа çар ĕçне лайăх йĕркелемс пулăшмалла. Комсомолецсемпе çамрăксене клубсен, вулав çуртĕсен ĕçне активлăн явăçтармалла.

Вăрçă интересĕсем Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал, вăрçă техники, тырпул, пахча-çимĕç йĕркеллĕ парса тăма хушаççĕ. Çак ответлă та хисеплĕ ĕçре парторганизацисем комсомол организацийĕсене тивĕçлипе пулăшса пырсан, комсомол организацийĕсем çамрăксемпе активлăн çыхăнса ĕçлесен, умра тăракан задачăсене малашне те чыслăн пурнăçа кĕртсе пырĕç.

ТĂВАН ХАЛАХ, САВĂН МУХТАВЛĂ ЫВĂЛУСЕМПЕ!

Совет Союзĕн Геройĕ полковник ПЕТРОВ



...1918 çул. Ют çĕршыв интервенчĕсем çамрăк Совет республики çине хăрушă тăвăл евĕр тапăнса килнĕ.

Партипе комсомолăн пĕтĕм йышĕнчен çурри ях ăн фронта кайнă.

Ют çĕршывсен интервенцийĕн çарĕсем килсе тулнине хирĕç тата революци сирпĕтсе антарнă эксплоататорла классен пăлхавĕсене хирĕç тăван çĕршыва сыхлакан вăрçă туса пыма большевикла парти халăха ура çине тăратнă.

Шăп çав вăхăтра 16 çулхи чăваш çамрăкĕ—Антон Петров тăван килйышне тата ял-йышне систермесĕр, хăйĕн ирĕкĕпе граждăн вăрçине тухса кайнă.

Тăван ашшĕ — Канаш районĕнчи Анча ялĕ çынни — Петр Васильевич Васильев, хут вĕренменскер, ывăлĕ çухалнишĕн шалтах хăраса ӳкнĕ. Çитменнине тата ăна ял куштанĕсем пыра-пыра хĕснĕ.

Пулас герой — Антон Петрович Петров — граждăн вăрçин хĕрӳ вутçулăмĕнче пиçсе большевикла парти ретне тăнă, Хусанта Хĕрлĕ Çар командирĕсем хатĕрлекен курсра, унтан Мускавра вĕренсе тухнă та 1922 çулхи кĕркунне çар командирĕн тумĕпе пĕр вăхăтлăха тăван ялне таврăннă.

Петр Василчăн «çухалнă» ывăлĕ—хĕрлĕ командир. Ку хыпар часах пĕтĕм яла саланнă. Шкулта пĕрле вĕреннĕ тантăшĕсем питĕ тĕлĕнсе ӳкнĕ. Хута ăста пĕлнĕрен, ăна чылайĕшĕ: «институт пĕтерĕ те пĕр-лĕр инженер пулса тăрĕ»—тесе шутланă.

— Еплс-ха эсĕ капла, — сăмах майăн хăйса ыйтнă унтан пĕр тантăшĕ, — эсĕ вĕт института кайма шутланăччĕ...

Антон пытарса тăман.

— Каяс тетĕп... Ленинграда, Çар инженерĕсем хатĕрлекен Академие вĕренме каятăп,—тесе ответленĕ, кĕскен.

Çар инженерĕсен академийĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн ăна академирех преподаватель пулса ĕçлеме хăварнă. Унта вăл 1936-мĕш çулччен ĕçленĕ. Кайран ăна, хăй ыйтнипе, çар чăсне ертсе пыма куçараççĕ.

Сапернăй уйрăм полкăн командирĕ подполковник Петров ертсе пыракан часть белофинсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте чапа тухнă. Пирĕн паттăр земляка полковник тăваççĕ. Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăлаççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпах Петров юлташ фронтра паттăррăн çапăçать. Тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре пултарулăх тата паттăрлăх кăтартнăшăн правительство ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Ялав орденĕ парса наградăланă.

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи октябрĕн 23-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Киевран кăнтăртарахра Днепр урлă ăкăçлăн каçса, Днепр шывĕн хĕвеланăç сыранĕнчи плацдарма пĕлсе çирĕплетнĕшĕн, çав çапăçусенче геройлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Антон Петрович Петров полковника Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Тăван халăхпа партин шанчăклă ывăлĕ полковник Антон Петрович Петров хăйне Совет правительстви çакăн пек чысланăшăн савăнса çапла çырать: «Правительствăн çак пысăк награди мана малашне татах та лайăхрах çапăçма хушать. Тăшмана хамăр çĕр çинчен тĕпĕ-йĕрĕпех хăваласа кăларичченех эпĕ канăç пĕлес çук, манăн чĕре лăпланас çук. Хăватлăн пыра-пыра çапнипе тăшмана пĕтĕмĕшпех аркатса тăкăпăр».

Пултарулă çар инженерĕ—полковник Петров, Хĕрлĕ Çар ретĕнче нумай çулсем хушши пулса, темиçе пин мухтавлă воина пăхса çитĕнтернĕ. Аслă ывăлне те хăй çулĕпех илсе пырать вăл. Унăн 13 çулхи Юрийĕ халь Воронежри Суворовла Çар училищинче вĕренет.

Пирĕн паттăр земляк халь Украинăри 1-мĕш фронтри паттăр çарсемпе пĕрле тăшмана хĕвелакăçнелле хăваласа пырать. Чăваш халăхĕ Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсенче хăйĕн паттăр ывăл-хĕрĕсен пархатарлă ĕçне туйса тăрать.

Чыс та мухтав тăван халăхăн паттăр ывăлне!

Совет Союзĕн Геройĕ майор БЕЗРУКОВ

Вăл Пăрачкав районĕнчи Дурасовка ялĕнче çуралса ӳснĕ. Хĕрлĕ Çара кайиччен Сиява ялĕнче учительре ĕçленĕ. Нимĕç захватчикĕсем вăрçă пуçланă вăхăтра Саратоври танковăй училищĕре вĕреннĕ.

Сержант Николай Безруков Пропойск, Рыльск тата Мценск хулисем патĕнчи çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă, çавăншăн ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата «За отвагу» медальпе наградăланă, лейтенант ятне панă.

1942 çулхи август уйăхĕнче лейтенант Безруков ертсе пыракан взвода пĕр çӳллĕ вырăна йышăнса илме хушнă. Безруков çав çӳллĕ вырăн патне мĕнле пырасси çинчен тĕплĕн шутланă та вăйсене тĕрĕс вырнаçтарнă. Тăшмана кĕтмен çĕртен пырса çапса, унăн взвочĕ нимĕçсен 3 орудине, 2 минометне, 7 пулеметне тата боеприпассемпе çар япалисем тиенĕ 4 повозкине тытса илнĕ. Правительство Безруков юлташăн паттăрлăхĕпе хăюлăхне пысăккăн хакласа ăна «Отечественнăй аслă вăрçăн пĕрремĕш степень» орденĕпе наградăланă. Çавăнпа пĕрлех Безрукова старши лейтенант ятне панă, танксен ротин командирĕ тунă.

Старши лейтенант Безруков хăйĕн ротине çапăçусенче пĕлсе ертсе пырать. Паттăрлăх кăтартнăшăн пирĕн земляка татах «За отвагу» медальпе наградăланă, унтан капитан ятне панă.

1943 çулхи хĕллехи кунсенче Безруков батальонĕ ытти чаçсемпе килĕшӳллĕн çапăçса, тăшмана хăвăрттăн атакăласа, тăшманăн Дон районĕнчи оборонине çĕмĕрсе кĕрет, халăх пурăнакан Урыв, Болдыревка, Солдатское тата ытти пунктсене йышăнса илет. Çав çапăçусенче вăл тăшманăн продовольстви склачĕсене, темиçе вунă орудине, пулемечĕсене тата винтовкăсем нумай тытса илет. Çав çапăçусенче паттăрлăх кăтартнăшăн ăна майор ятне панă.

Иртнĕ çулта çуллахи вăхăтра майор Безруков хăйĕн танковăй батальонне тăшманăн Рыльск хулинчен çурçĕртерехри оборонине татса кĕнĕ çĕре ертсе каять. Тăшмана çирĕплесе тăма май памасăр, Безруков ертсе пыракан часть халăх пурăнакан нумай ялсене тата Путивль, Бурын хулисене тытса илет. Вăл ертсе пынипе разведчиксем нимĕçсен полковникĕпе адъютантне, машинипе пĕрлех, тыткăна илнĕ. Çак çапăçусенче Безруков виçĕ хутчен аманнă, анчах çапăçуран пĕрре те тухман.

Безруков юлташăн батальонĕ Днепр шывĕ урлă каçнă çĕре хутшăннă. Вăл унта та хăйĕн паха примерĕпе танкистсене çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарать. Безруков юлташăн батальонĕ Днепр шывĕн хĕвеланăç енчи плацдармне аслăлатассишĕн хăюллă çапăçнă. Çакăнти çапăçусенче геройла ĕçсем тунăшăн ĕнтĕ Николай Григорьевич Безруков юлташа СССР Верховный Совет Президиумĕ 1943 çулти октябрĕн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх Совет Союз Геройĕн ятне панă.

Пирĕн земляк Безруков ертсе пыракан батальон халĕ те тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапать. Унăн мухтавлă воинĕсем Верховный Главнокомандующии, Совет Союзĕн Маршалĕн Сталин юлташăн тавне тивĕçлĕ пулчĕç.

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ районсенче

Çак кунсенче чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕн пĕр бригади Чкаловски, Первомайски, Комсомольски тата ытти районсенчи колхозсенче пулчĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем вĕсене питех те ăшшăн кĕтсе илчĕç.

Концерт чăваш композиторĕ Г. Лебедев çырнă «Сталин çинчен хунă юрăпа» пуçланать. Илемлĕ сăмахсем, янравлă, чун-чĕрене хумхантаракан кĕвĕ.

Концертăн лайăх енĕ вăл — программăна СССР-ти халăхсен ташшисемпе юррисене кĕртни. Вырăс украина, тутар, белоруссен тата грузи халăхĕсен юррисемпе ташшисем пурин кăмăлне те каять. Вĕсем СССР-ти халăхсен туслăхне туйса савăнаççĕ.

Ансамбль чăвашла юрăсене: «Колхоз уйхирĕ», «Шурă кăвакарчăн», «Пĕрле ӳснĕ тантăшсем», вырăсла юрăсене: «Неделька», «Вечер на рейде», «На коне вороном», грузи халăхĕсен «Сулико» ятлă юррине питĕ аван юрласа пачĕ.

Çакăнпа пĕрлех концертăн хăшпĕр çитменлĕхĕсене те палăртмалла. Программăра пĕтĕмпех кивĕ юрăсем темелле. Çавăнпа концерт 1939—1940 çулсенчи концертсенчен нимĕнпе те уйăрăлса тăмасть. Хальхи вăхăтра ку, паллах, ансамблĕн пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать. Чăваш халăхĕ хальхи пурнăçпа çыхăнса тăракан çĕнĕ юрăсене илтесшĕн. Анчах та вĕсем програмăра çук.

Тепĕр çитменлĕх вăл — ансамбль чăваш композиторĕсен творчествипе палланштарманни. Програмăра Лебедевпа Воробьев композиторсен юррисем кăна пур.

Артистсем сцена çинче хăйсен пултарулăхне уйрăммăн кăтартманнине те палăртса хăвармалла. Хор юрлать те унтан иккĕн ташласа парать, унтан каллех хор юрлать, вăра концерт пĕтиччен çапла пырать. Пĕччĕншерĕн тухса юрлакансем пачах та çук.

А. ПАВЛОВ.

Чугун çул валли—вутă

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана (1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи январĕн 15-мĕшĕччен) мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	63,2	67,2	1	1
Вăрнар	58,5	65,5	2	2
Ишлей	52,2	45,2	3	16
Шăхасан	52,0	57,8	4	7
Сĕнтĕрвăрри	49,6	65,5	5	3
Первомайски	49,0	59,1	6	6
Шупашкар	47,9	56,7	7	9
Етĕрне	47,7	47,3	8	14
Канаш	46,2	56,1	9	10
Сĕнтĕр	45,3	39,2	10	23
Вăрмар	45,0	60,5	11	5
Елчĕк	43,3	46,3	12	15
Калинино	42,7	63,2	13	4
Комсомольски	40,8	40,7	14	21
Советски	39,8	41,0	15	20
Çĕмĕрле	39,3	39,8	16	22
Çĕрпӳ	38,9	53,8	17	11
Куславкка	38,5	38,4	18	26
Октябрьски	38,4	34,6	19	27
Улатăр	37,7	56,8	20	8
Красноармейски	36,3	45,0	21	17
Хĕрлĕ Чутай	35,6	43,8	22	18
Элĕк	35,3	38,7	23	24
Пăрачкав	35,0	42,0	24	19
Тăвай	31,8	50,6	25	12
Шăмăршă	26,9	47,9	26	13
Чкаловски	26,6	38,7	27	25
Кувакино	21,0	30,7	28	28

Асăрхаттарни: Комсомольски, Кувакино, Пăрачкав тата Чкаловски районсем тăрăх даннăйсем январĕн 10-мĕшĕнче пулнисемех.

Çур çулхи плана Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле пурнăçлатпăр

ЙĔПРЕÇ, январĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Леспромхоз чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттармалли çур çулхи задание паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун тĕлне пурнăçлама пулчĕ. Йĕпреç районĕ çур çулхи плана февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçлать. Ку район январĕн 17-мĕшĕ тĕлне çур çулхи задание 60 процента яхăн пурнăçланă та ĕнтĕ. Çак районри «Красный фронтовик», «Коминтерн», «Красная звезда» колхозсем чугун çул валли вутă хатĕрлесе турттарас графика 70 процент пурнăçланă. Вутă турттаракансем Ф. Григорьева, И. Максимов юлташсем кашни кунах задание икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Çавăн пекех Шупашкар районĕ те ку ĕçе ăнăçлăн туса пырать. Вăл та çур çулхи плана 50 процента яхăн пурнăçланă.

Халĕ вăрманта ĕçлекенсем хушшинче илнĕ обязательствăна пурнăçлассишĕн ăмăрту сарăлса пырать.

П. ФЕДОРОВ,
Леспромхоз директорĕ.

Хăйсен сăмахĕсене пурнăçа кĕртеççĕ

КАНАШ, январĕн 18-мĕшĕ. (Телефонпа). Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе работницăсем январь уйăхĕн пуçламĕшĕнче çакăн пек обязательствăсем илнĕччĕ: январь уйăхĕнче декабрь уйăхĕнчинчен 35 процент чухлĕ продукци ытларах кăлармалла, продукцин хăйне ларакан хакне 5 процент чухлĕ чакарса, ĕç тухăçлăхне 10 процент ӳстермелле, вăтамран кашни рабочин кулленхи задание 200 процента мар пурнăçламалла, ялхуçалăх машинисене юсама запас пайсем тăвассине январĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăçламалла.

Илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçлассишĕн кашни рабочипе работница пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Механически тата йывăçран тĕрлĕ япаласем тăвакан цехсем уйăхри задание январĕн 17-мĕшĕ тĕлне 60 процент ытла тултарчĕç. Çамрăк столярсем Зобко, Бабаев, Андреев юлташсем ĕç нормине кашни кунах 300 процент таран пурнăçлаççĕ.

И. ЕГОРУШКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Заем вылявĕсем

Январĕн 15-мĕшĕнче Мускавра заемсен иккĕ вылявĕ пулса иртнĕ: иккĕмĕш пятилетка заемĕн (тăваттăмĕш çулхи кăларăмĕн) 30-мĕш вылявĕ тата ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заемăн 25-мĕш вылявĕ.

Иккĕмĕш пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) заемĕн вылявĕнче пĕр миллион та 670 пин выигрыш, пĕтĕмпе 273 миллион та 920 пин тенкĕлĕх тухнă. 3000 тенкĕлĕх выигрыш 10.469 серири 01-мĕш № облигаци çине тухнă.

ССР Союзĕн оборонине тĕреклетмелли заемăн вылявĕнче 410.760 выигрыш, пĕтĕмпе 56.818.800 тенкĕлĕх тухнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 17-мĕшĕнче НОВОСОКОЛЬНИКИРЕН çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă, темиçе ял тытса илнĕ, вăл шутра: **СЛОБОДА, КИСЕЛЕВИЧИ, АЛЬХИМОВО, ГВОЗДОВА, КУРОВО.**

НОВОГРАД-ВОЛЫНСКИЙ хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Ровно облаçĕнчи ТУЧИН ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата темиçе ял йышăнса илнĕ.

УМАНЬ хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене ăнăçлăн сирсе-сирсе янă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 166 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 39 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Новосокольникирен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та нимĕçсен оборонинчи вăйлă çирĕплетнĕ Киселевичи ятлă пункта тытса илнĕ. Киселевичи ялĕшĕн пынă çапăçура нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 2 танк, 7 тупă тата 32 автомашина пĕтерсе тăнă. Пирĕн тепĕр соединени нимĕçсене темиçе ялтан хĕссе кăларнă. Çав ялсемшĕн пынă çапăçусенче гитлеровецсене пĕр батальон таран пĕтерсе тăнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Новоград-Волынский хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, Ровно облаçĕнчи Тучин ятлă район центрне тата ытти темиçе яла нимĕçсенчен тасатнă. Пирĕн подразделенисем тăшман ăçтан-ăçтан персе тăнине пĕлнĕ те çав вырăнсенчен айккипе иртсе кайнă, унтан вара нимĕçсен Тучин ялĕнчи гарнизонне сасартăк тапăннă. Нимĕçсем хушшинче паника пуçланса кайнă. Совет боецĕсем, çав самантра усă курса, 300 гитлеровец таран пĕтерсе тăнă. Темиçе тупă, 24 пулемет тата боеприпас складĕ тытса илнĕ.

* * *

Умань хулинчен çурçĕртерехре тăшман темиçе хутчен те хаяр контратакăсем тапрата-тапрата янă. Пирĕн артиллеристсем тата танкистсемпе пехотинецсем, вăйлă вут-çулăм тăкса, нимĕçсен контратакисене пурне те сирсе янă, гитлеровецсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Кун касиччĕнхи çапăçусенче тăшманăн 80 танк ытла, 16 бронемашина, хăй тĕллĕн çӳрекен 6 тупă, 7 бронетранспортер тата 200 автомашина персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăнă. Тепĕр участокра тăшман пехотин батальонĕпе танксем пирĕн позицисене атакăланă. Вĕсем, малалла тапăнса пырса, пĕр яла йышăнса илнĕ. Совет подразделенийĕсем вара тăшманăн çав ушкăнне çавăрса илнĕ те пĕтерсе тăнă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çунтарса янă 23 танкĕ тăрса юлнă тата гитлеровецсен 800 виллин таран выртса юлнă.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 10-мĕшне çитиччен нимĕçсен боеприпас, горючи тата апат-çимĕç турттарса пыракан 37 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав крушенисене пула 300 вагонпа платформăна яхăн çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Пехотинецсем çыхăнăвăн телеграфпа телефон линине 80 километр тăршшĕ татса тухнă. Тата, унсăр пуçне, совет патриочĕсем нимĕçсен икĕ гарнизонне аркатса тăнă, пĕр бронемашина, 4 тупă тата автомашинăсен гаражне пĕтерсе тăнă. 600 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Юлашки вăхăтра нимĕç салтакĕсем тыткăна ушкăн-ушкăнĕпе парăнма пуçларĕç. Украинăри 1-мĕш фронтăн пĕр участокĕнче нимĕçсен 168-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен ушкăнĕ Хĕрлĕ Çар енне куçнă. Çав ушкăнри унтер-офицер Эмиль П. çапла каланă: «Хамăн çынсене пухса, эпĕ çапла каларăм: «Германия ку вăрçăра ĕнтĕ пурпĕр аяла пулчĕ, эпир çĕнĕ çухатусем тӳсниччен нимĕнле усă та пулас çук. Хăвăр пурнăçăрсене сыхласа хăварас тесе, эсир вырăссем енне тарса каçма килĕшетĕр-и?»—терĕм. Пурте пĕр кăмăллă пулса килĕшрĕç. Вара эпир тыткăна парăнтăмăр».

Çав дивизирех хăйĕн отделенийĕпе пĕрле тыткăна парăннă унтер-офицер Карл Г. çапла каласа кăтартнă: «Вырăссем хаяр çапăçура пирĕн полка аркатса тăкрĕç. Тăрса юлнисене вырăс танкĕсем хăвалама тытăнчĕç те, салтаксем вара ăçта килчĕ унта тарса çухалчĕç. Эпĕ хам отделенири салтаксемпе пĕрле пĕр çырмана пытанса лартăм. Ирхине эпир вырăс кавалерисчĕсене куртăмăр. Эпĕ салтаксене çырмаран тухса, алăри хĕçпăшала çул çине пăрахса, алăсене çĕклеме хушрăм. Вĕсем эпĕ хушнине кăмăлласах йышăнчĕç. Тыткăна лекнĕ хыççăн вĕсем мана хăйсен пурнăçне пĕтесрен сыхласа хăварнăшăн тав турĕç».

Украинăри 1-мĕш фронтăн тепĕр участокĕнче эсэсовецсен «Лангемарк» ятлă штурмовой бригадинчен 72 салтакпа пĕр унтер-офицер тыткăна парăннă. Вĕсем çапла каласа кăтартнă: «Лангемарк» бригадине Бельгире турĕç. Чуднов районĕнче бригадăна вырăссем çавăрса илчĕç те йывăр çухатусем кӳчĕç. Офицерсем тарса пĕтрĕç, эпир çавăнтах тăрса юлтăмăр, вара тыткăна парăнтăмăр». Çав кунах Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 198-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен икĕ ушкăн салтак куçнă. Пĕр ушкăнĕнче 7 нимĕç, 2 австриец, 2 чех тата пĕр поляк. Вĕсем хăйсемпе пĕрле 2 пулемет, 3 автомат, 8 винтовка, 3 пистолет тата боеприпассем илсе каçнă. Тепĕр ушкăнĕнче 7 салтак, вĕсем пурте словенсем, вĕсене пурне те нимĕçсен çарне ирĕксĕр мобилизацилене.

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Запорожье облаçĕнчи Марьевка ялĕнче тунă тискер ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Хăйсем каялла чакма пуçличчен 3—4 кун маларах нимĕçсем пирĕн ялти тата кӳршĕри ялсенчи пур халăха та, 14 çултан пуçласа 70 çула çитнисене, укрепленисем тума хăваласа кайрĕç. Нимĕçсен çар влаçĕсем çапла пĕлтерчĕç: кам та кам окопсем алтассинчен пăрănса тăрать, çавсене пурне те персе пăрахатпăр, терĕç. Хăйсем çапла хăратса каланине гитлерла ирсĕрсем чăннипех пурнăçа кĕртрĕç. Пуçкасакансем Марьевка ялĕнчи тата кӳршĕри Беленькое ялĕнчи 37 мирлĕ çынна окопсем чавма килĕшменшĕн персе пăрахрĕç. Полина Волоченко колхозницăн пĕчĕк ачисем чирлĕ пулнă, çавăнпа вăл ĕçе тухма пултарайман. Нимĕç офицерĕ ăна вилес пек хĕнесе пĕтернĕ те çав чирлĕ ачасемпе пĕрле сарая хупса лартнă. Тулта хаяр сивĕсем тăнă, Волоченко ачисемпе пĕрле шăнса вилнĕ. Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем пирĕн патра тунă пур тискер ĕçсене сăмахпа каласа кăтартма питĕ йывăр». Акт çине Марьевка ялĕнчи çак çынсем алă пуснă: Сергей Фоличенко, Анна Коваль, Вера Третьяк, Аниська Филиппенко, Варвара Родченко.

Ленин ялавĕпе, Сталин ертсе пынипе эпир çĕнтеретпĕр

И. ИВАНОВ

ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ

Виçмине пирĕн ĕмĕрти аслăран та аслă мыслитель, большевиксен партине никĕсне хывакан, тĕнчери пĕртен-пĕр Совет государствине, унăн хĕçпăшаллă вăйĕсене тăвакан, пĕтĕм ĕççыннисен ашшĕне учителĕ Владимир Ильич Ленин вилнĕренне 20 çул тулать.

Виççĕмĕш хут ĕнтĕ эпир аслă Ленин вилнĕ куна совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешнĕ вăхăтра кĕтсе илетпĕр. Кăçал эпир çак куна вăрçă ĕçĕнче пирĕншĕн усăллă тĕп улшăнусем пулнă условисенче тата Хĕрлĕ Çар иртнĕ çулта чаплă çĕнтерӳсем тунă вăхăтра кĕтсе илетпĕр.

Халĕ Отечественнăй аслă вăрçă тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкмалли, хамăр çĕршыва тăшмантан хăвăртрах тасатса çитермелли тапхăра куçрĕ. Вăрçă тăшмана тĕппĕрех çĕнтерессипе патнелле çывхарса пырать, çĕнтерӳ инçе мар ĕнтĕ.

Анчах та «лăпланса ларма тытăнсан,—вĕрентет пире Сталин юлташ, — çĕнтерĕве аларан вĕçертме пулать. Çапăçмасăр, вăй хумасăр çĕнтерме çук. Çĕнтерĕве ăна çапăçса туянаççĕ. Çĕнтерӳ çывăх ĕнтĕ, анчах та ăна алла çавăрса илес тесен, çĕнĕрен ытларах вăй хуни, пĕтĕм тыл хăйне-хăй шеллемесĕр ĕçлени, Хĕрлĕ Çар фронтра пĕлсе тата тăтăклăн кĕрешни кирлĕ». Апла пулсан, эпир 1944 çула тăшмана тĕппипех çĕмĕрсе тăкмалли çулталăк тăвас тетпĕр пулсан, пирĕн халĕ кашниннех вăй-хăвата икĕ-виçĕ хут ӳстерсе, вăй-хăвата тата вăхăта шеллемесĕр ĕçлесе, хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах туса кăлармалла, тухăçлă, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ тырпул туса илессишĕн кĕрешмелле, çапла вара фронта пур тĕлĕшпе те пулăшса тăрассине вăйлатмалла.

Владимир Ильич Ленин вăрçăра çирĕп те иксĕлми тыл тытаканни çĕнтерет тесе вĕрентет. Пирĕн совет тылĕ çавăн пек çирĕп те иксĕлми тыл пулса тăрать. Пирĕн çĕршыва фронтпа тыл пĕрлĕхлĕ боевой лагерь пулса тăраççĕ. Çак боевой лагерьте пирĕн чăваш халăхĕ те паллă вырăн йышăнса тăрать. Чăваш халăхĕ, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, фронта пулăшассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет, вăл ирсĕр тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас тесе хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарĕшĕн нимĕн те шеллемест. Якунин юлташ главный инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ çирĕм уйăх хушши ĕнтĕ Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура мала тухса пырать. Вăл Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне сакăр уйăх хушши пĕр вĕçĕмсĕр хăйĕн аллинче тытса тăрать. Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ Октябрьти социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă кун тĕлне Хĕрлĕ Çар Главнокомандованийĕн фондне плана планран иртерсе пĕр миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Пирĕн колхозсем тата колхозниксем 1943-мĕш ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарчĕç, аванс шучĕпе 1944 çулшăн 105.000 пăт тырă парчĕç, государствăна 2.500.000 пăт ытла тырă сутрĕç, государствăн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли планне ирттерсе тултарчĕç, государствăна аш-какай памалли 1943 çулхи плана тултарса, аванс шучĕпе 1944 çулшăн 100.000 пăт аш-какай парчĕç.

Аслă Ленинăн ĕçĕсем тата унăн çĕнтерӳллĕ ялавĕ пире нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳре — тылра та, Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче те геройла ĕçсем тума хавхалантарса пычĕ, хавхалантарать те.

Совет государствине никам та çĕнтерме пултараймасть. Вăл тĕнчере чи çирĕп, чи вăйлă государство пулса тăрать. Унăн пурнăçĕнче пулакан кашни çĕнĕ тĕрĕслӳ, тенĕ Ленин, рабочисемпе хресченсен çĕнĕ те çĕнĕ сийĕсене кĕрешĕве çĕклет, вĕсене пысăк йывăрлăхсенче пиçĕхтерет, массăллă çĕнĕ паттăрлăха çуратать.

Совет Союзĕн вăйĕпе хăвачĕ пирĕн çĕршыври халăхсен Ленинпа Сталин партийĕ аталантарнă туслăхĕнче; ССР Союзĕнче социализм çĕнтернинче, çĕршыва индустриализацилес тата ялхуçалăхне коллективизацилес ĕçре ленинла-сталинла политика çĕнтернинче, тĕнчери чи çирĕп те малта тăракан стройра — совет стройĕнче; Ленин — Сталин партийĕнче, унăн ертсе тата çул кăтартса пыракан вăйĕнче, вăл халăхпа таччăн çыхăнса тăнинче пулать. Ку çыхăну Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче татах та ытларах çирĕпленчĕ.

Анчах пирĕн умра тата нумай йывăрлăхсемпе тĕрĕслӳсем тăраççĕ-ха. Тăшман çухатусем тӳсет, анчах та ăна тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкман, тесе калать Сталин юлташ. Тăшман вăйлă-ха. Вăл, ăнăçу тăвас тесе хăйĕн юлашки вăйĕсене çапăçăва кĕртсе пырĕ. Вăл хăй хавшаса пынă май татах та урса пырать. Тăшман кунсеренех урса пынине Краснодар тата Харьков хулисенче пулса иртнĕ суд процессĕсем пĕтĕм тĕнче умĕнче уçăмлăн кăтартса парчĕç. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн ĕнтĕ фашистла захватчиксене хирĕç хаяррăн та тăтăклăн кĕрешмелле, мĕншĕн тесен тискер тăшман Совет çĕрне çапăçусемсĕр пĕр километр та хăвармасть.

Совет халăхĕ вăрçăн вăрăм та йывăр çулне утса тухрĕ. Халĕ эпир çапăçусен тăтăклă тапхăрне — вăрçăн юлашки йывăр та хаяр тапхăрне кĕтĕмĕр. Çавăнпа ĕнтĕ халĕ кашни совет ĕççынниех хăйĕн пĕтĕм вăйĕсене тата мĕнпур майсене пĕтĕçтерсе çĕнтерӳ тăвассишĕн кĕрешмелле.

Граждăн вăрçи çулĕсенчех Владимир Ильич Ленин çапла вĕрентнĕ: «питех те хăватлăрах тăшмана пĕтĕм вăйсене пухса кĕрешнипе кăна çĕнтерме пулать. Пĕр пуху та, пĕр канашлу та, кирек мĕнле ыйтусене сӳтсе-явасси те çак ыйтăва сӳтсе явмасăр ан ирттĕр: вăрçăна пулăшас тĕлĕшпе эпир пурне те тунă-и, хамăрăн вăйсене пĕтĕмпех пухнă-и, фронта çителĕклĕ пулăшу янă-и».

Çавăнпа ĕнтĕ, эпир 1943 çулта начарах мар ĕçлерĕмĕр пулсан, пирĕн 1944 çулта татах та лайăхрах, татах та тухăçлăрах ĕçлесе, фронтпа çĕршыва хĕçпăшалсем, боеприпассем, тумтирсем ытларах памалла, фронтпа çĕршыва тырă, аш-какай, пахча-çимĕçсем, промышленноçа чĕртаварсем татах та ытларах памалла.

Пирĕн масса хушшинчи агитацилпе пропаганда ĕçне халь умра тăракан тĕп задачăна пурнăçа кĕртес тĕллевпе—кăçал хамăрăн çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен тасатса çитерессишĕн халăхăн пĕтĕм вăйĕсене пухса, мĕнпур майсемпе усă курса, тырпул тухăçлăхне ӳстерес тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем ытларах туса кăларас тĕллевпе туса пымалла.

Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш çураки çывхарса килет. Пирĕн халех пĕтĕм агитколлективсене, пĕтĕм агитаторсене, докладчиксене, лекторсене, ялти интеллигенцине (учительсемпе агрономсене тата зоотехниксене), отечественнăй вăрçă участникĕсене, районсенчи партипе совет активне, вулав çурчĕсене, клубсене, библиотекăсене тата пичете çуракине пур тĕлĕшпе те лайăх хатĕрленсе çитессишĕн кĕрешме—сортлă тата лайăх пахалăхлă вăрлăхсем çителĕклĕ хатĕрлессишĕн, тракторсене тата ялхуçалăх машинисене пысăк пахалăхпа юсассишĕн, уйхире удобренисем кăларассишĕн, бригадирсемпе звеноводсене тата ытти кадрсене хатĕрлессишĕн кĕрешме мобилизацилемелле. Фабрикăсемпе заводсенче политикăллă агитаци ĕçне татах та анлăн сарса пырса, ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пымалла тата лайăх продукци туса кăларассине ӳстерсе пымалла тăвас пулать. Халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те социализмлă ăмăртăвăн ялавне татах та çӳлерех çĕклемелле.

Эпир çĕнĕ 1944 çула çĕнтерӳ тăвас çирĕп шанчăкпа кĕтĕмĕр. Пире аслă Ленинăн идейисем çĕнтерӳсем тума ертсе пыраççĕ. Вĕсем хăватлă, мĕншĕн тесен тĕрĕс. Ленинизм — вырăссен тата пĕтĕм тĕнчери культурăн чи паха çитĕнĕвĕ пулса тăрать. Пирĕн кашниннех Ленинăн аслă идейисене тарăнăн вĕренсе, вĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла. Вĕсем пирĕн кĕрешӳпе çĕнтерӳ çулне çутатса тăраççĕ.

Ленин ялавĕпе, аслă Сталин ертсе пынипе эпир çĕнтеретпĕр. Фашизм пĕтсе ларатех, пирĕн тĕрĕс ĕç çĕнтеретех. Халăхсен пĕтĕм вăйне тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкнă çĕре парар!

Вăйлă тырпул туса илессишĕн

Вăрмар районĕнчи Çĕнĕ Вĕренерти «Красный Мурат» колхоз иртнĕ çулта çуракине вăхăтра хатĕрленчĕ, пур агромероприятисене те пурнăçа кĕртсе пычĕ. Акана кĕске срокра тата пахалăх енчен лайăх туса ирттерчĕ. Тырра вăхăтра тата тăкаламасăр пуçтарса кĕртнĕ.

Государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татрĕ тата 1944 çулшăн аванс шучĕпе 152 центнер парса хучĕ.

Халĕ «Красный Мурат» колхоз кăçалхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе пур агромероприятисене те пурнăçласа пырать.

Çуракинче кирлĕ ялхуçалăх машинисене пĕтĕмĕшпех юсаса çитерле. Вăрлăхсене кирлĕ таран уйăрса, сортласа, тасатса хунă, районри вăрлăх лабораторинче сăнаса пăхнă. Вăрлăхсен шăтас пахалăхĕ аван.

Колхозниксем халь вырăнти удобренисене хатĕрлес тата вĕсене уя кăларас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Уйăхлăхра тислĕк кăларма тата ытти удобренисене пухма шутласа хунă плана ытлашшипех тултарма тăрăшаççĕ.

Е. НИКИТИН.

Аш-какай парса татрĕç

СОВЕТСКОЕ. Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳĕсемпе савăнса тата тăшмана аркатса тăкма пулăшас шутпа, районри колхозсем государствăна аш-какай парас ĕçе вăйлатрĕç.

Пушкасси ялсоветне кĕрекен „Рекорд“, „Октябрь“ колхозсем 1944 çулшăн аш-какай, брынза, тир тата ыттисене те парса татрĕç. Мăн Чурашри „Прогресс“ колхоз государствăна 1945 çулшăн та аш-какай парса хучĕ.

М. СТЕПАНОВА.

„Ĕçри мухтав кĕнеки“

Кавказ лешьенчи чугун çулăн Управленийĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕ панă Хĕрлĕ Ялав çумĕнче (ăна Кавказ лешьенчи железнодорожниксем темиçе уйăх ĕнтĕ хăйсен аллинче тытса тăраççĕ) «Ĕçри мухтав кĕнеки» пур. Çав кĕнеке çине чугун çул çинчи чи лайăх çынсен, хастарлăн та хăйсене хăйсем шеллемесĕр ĕçлекен çынсен, ĕçре пуçарулăх кăтартакан çынсен ячĕсене, чапа тухнă железнодорожниксен ĕçĕсем çинчен кĕскен çырса хураççĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Стеттиниус Совет Союзĕпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен

ВАШИНГТОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государственнăй секретарĕн заместителĕ Стеттиниус ĕнер каçхине радиопа сăмах каланă. Вăл çапла каланă: вăрçă хыççăн США Совет Российĕпе лайăх килĕштерсе ĕçлес политика вырăнне мĕнле те пулин урăх политика тытса пырас пулсан, çакă вăл тӳрлетме çук пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. «Виçĕ çул ытла ĕнтĕ эпĕ пирĕн çĕршывра Совет Союзĕн официальнăй представителĕсемпе таччăн çыхăнса ĕçлетĕп,—тенĕ вăл.—Эпĕ совет халăхĕн хастарлăхĕпе, тавçărулăхĕпе тата хăюлăхĕпе çав тери хĕпĕртетĕп». «Пĕрлешӳллĕ штатсем хальхи вăхăтра та, вăрçă пĕтнĕ хыççăн та Совет Союзĕпе таччăн çыхăнса ĕçлени пирĕншĕн усăллă çеç пулма пултарать, тесе шутлатăп эпĕ»,—тенĕ Стеттиниус.

Британин радио саракан корпорацийĕ Совет Союзĕн çĕнĕ гимнне радиопа панă

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: выçарникун, январĕн 16-мĕшĕнче, Британин радио саракан корпорацийĕ Совет Союзĕн çĕнĕ гимнне пĕрремĕш хут радиопа панă. Гимна Британин радио саракан корпорацийĕн симфониллĕ оркестрĕ выляна. Оркестра дирижер Адриан Боулт сэр ертсе пынă. Çав гимна граммофон пластинки çине ӳкерсе илсен, ăна каярахпа Çурçĕр Америкăпа Европа валли панă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен çарĕсен Çурçĕр Африкăри штабĕ çапла пĕлтерет: паян Америкăн 5-мĕш армийĕн составне кĕрекен французсен тата американецсен чаçĕсем сăртсем урлă çине тăрсах малалла куçса пынă. Сант-Элиа патнелле пыракан çул çинче çав вырăнта пуç пулса тăракан çӳллĕ вырăнсене тытса илнĕ. Союзниксен çарĕсен фрончĕпе Рапидо шывĕн айлăмĕ хушшинче юлашки чи çӳллĕ вырăн пулса тăракан Троккио ятлă тăва икĕ енчен атакăлаççĕ, атака ăнăçлăн пулса пырать. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче акăлчансен тата новозеландецсен чаçĕсем тăшманăн позицийĕсене тапăннă. Тыткăна илнисем пур. Тăшмана çухатусем кӳнĕ.

Ĕнер союзниксен авиацийĕн йывăр тата вăтам бомбардировщикĕсем тăшманăн чугун çулĕсене тапăннă.

Бомбардировщик-истребительсем çавăн пекех Шибеник гаванĕнче (Югославия) тăракан тăшман суднисене тапăннă.

ЛОНДОН, январĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем çаплах наступлени туса пыраççĕ. Монте-Троккио çинче çĕнĕрен йышăннă позицисене лайăхлатнă. Малти отрядсем Рапидо шывĕ патне тухнă.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер «Мессершмитт» йышши самолетсем валли уйрăм пайсем туса кăларакан Клагенфуртри (Австрия) завода атакăланă. Бомбăсем ангарсене тата завод патне пыракан чугун çул линине тӳрремĕнех пырса тивни паллă пулнă. Бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Югославии çыранĕнче ларакан Зара хулинчи нимĕçсен çар объекчĕсене тапăннă.

Италин тăшман йышăнса тăракан территорийĕ çинче союзниксен авиацийĕ аэродромсем тата тăшман çарĕсен çыхăну центрĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔСРИ АВИАЦИЙĔН БАЗИСЕМ ТĂШМАН ОБЪЕКЧĔСЕМ ПАТНЕ ÇЫВХАРНИ

ЛОНДОН, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат çапла çырать: Вăтаçĕр тинĕсри йывăр бомбардировщиксен ушкăнне, Америкăн 15-мĕш авиаци соединенине кĕрекенскере, Италие куçарни çав бомбардировщиксен тăшман патне çитмелли çулне 960 километр чакарать. Союзниксем халĕ ĕнтĕ кăнтăрла тăшмана Англирен çеç мар, Италирен те вĕçсе пырса тапăнма пултараççĕ. Тăшманăн истребительнăй авиацийĕн тĕрлĕ еннелле салалансалла пулать, унăн Германири предприятисемсĕр пуçне тата оккупациленĕ Чехословакири предприятисене те сыхламалла пулать.

СОФИЯ ХУЛИ ÇИНЕ БОМБĂСЕМ ПĂРАХНИН РЕЗУЛЬТАЧĔ

СТАМБУЛ, январĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). **(Вăхăтра çитермен).** Болгарирен килнĕ хыпарсем тăрăх, София çине бомбăсем пăрахнине пула çав хулан варринчи кварталсем пĕтĕмпех ишĕлсе пĕтнĕ. Вилнисемпе аманнисем питĕ нумай. Государство тытăмĕ пĕтĕмпех йĕркерен тухнă. Çыхăну пĕтсе ларнăпа пĕрех. Хула транспортсăр, шывсăр, çутăсăр, апат-çимĕçсĕр тăрса юлнă.

Мĕнпур министерствăсен, двоpецăн, ют çĕршыв миссийĕсен, парламентăн, почтăн тата телеграфăн çурчĕсем, çар чаçĕсен казармисем, Германи штабĕсем тата нимĕçсем пурăнакан гостиницăсем ишĕлнĕ е пысăк сиен курнă. Хула çине бомбăсем пăрахни халăха питĕ хăратса пăрахнă, влаçсем çухалса кайнă. Софирен икĕ талăк ĕнтĕ пур еннелле те çынсем вĕçĕ-хĕррисĕр тараççĕ, вĕсем хушшинче хăйсен çемьисемпе пĕрле таракан çар çыннисем нумай. Вокзалсем таракансемпе тулса ларнă.

Бомбăсем пăрахнине пула Болгарипе Германин сиен курнă çар чаçĕсем хуларан тухса Пловдив еннелле каяççĕ. Çар складĕсене турттарса тухаççĕ.

Бомбăсем пăрахнă хыççăн правительство та, государствăн ответлă чиновникĕсем те хула хыçне тарнă. Пĕр талăк ытла хулара нимĕнле власть та пулман. Иккĕмĕш кун пĕлнĕ тĕле кăна правительство халăха пур йышши транспортпа та хуларан турттарса тухасси çинчен, хулана кĕме чарасси çинчен, вăрланăшăн вĕлерессе çинчен распоряженисем кăларнă.

Сывлăшран тапăннинчен хӳтĕлес ĕç пĕтĕмпех йĕркерен тухнă, пушарсене сӳнтерме шыв пулман. Государство учрежденийĕсемпе сутуилӳ предприятийĕсем январĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа çеç ĕçлеме тытăнаççĕ.

Халăх Болгари правителĕсемпе нимĕçсене хытă ятлать.

СТАМБУЛ, январĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Турцире тухса тăракан «Танин» ятлă хаçат çапла çырать: январĕн 10-мĕшĕнче акăлчансемпе американецсен авиацийĕ икĕ хутчен вăйлă тапăннине пула София хули питĕ хытă ишĕлсе пĕтнĕ. Хулари пурнăç пĕтĕмпех йĕркерен тухнă. Хулара ванманни пĕр чӳрече кантăкĕ те юлман.

София хулипе Турци хушшинче чугун çул тăрăх темиçе кун поездсем çӳремен. Телефонпа телеграф çыхăнăвне халĕ те тӳрлетмен-ха.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Ирĕклĕ Югославия» ятлă радиостанци Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар штабĕн пĕлтерĕвне панă. Пĕлтерӳре çапла каланă: «Тито маршалăн çарĕсем контратакăсем пуçласа янă. Вăтам тата Хĕвеланăç Боснире хăшпĕр секторсенче нимĕçсен наступленине чарса лартнă. Неретва шывĕ тăрăх тата Крешево хули патĕнче тăшмантан ирĕке кăларнă территори çине кĕме хăтланнă нимĕç çарĕсене каялла ывăтса янă. Ливно—Дувно секторĕнче тăшмантан çирĕплетнĕ позицие тытса илнĕ. Хорватире, Кордун провинцийĕнче, йывăр çапăçусем хыççăн Глина хулине тăшмантан туртса илнĕ. Огулин хули çывăхĕнче Остреже ятлă яла тытса илнĕ. Хĕвеланăç Боснире Бихачпа Крупа хушшинчи чугун çула татнă. Далмацире Синьпе Врлика хушшинчи районра вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

ЖЕНЕВА, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Вăтам, Хĕвеланăç тата Хĕвелтухăç Боснире çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Словенире партизансен отрячĕ тата Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 5-мĕш бригади Кочевьепе Ракек хушшинчи çулпа пыракан нимĕçсен пысăк колоннине тапăннă, 6 грузовик пĕтерсе тăнă тата тăшман салтакĕсемпе офицерĕсене чылай вĕлерсе пĕтернĕ.

Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем Рыбницки улăхра темиçе кун хушши тăшманăн пĕр йышлă отрячĕпе çапăçнă. Тăшманăн тарма лекнĕ, вара ăна Кочевье хули патне çитиччен хăваласа янă.

Ответлă редакторшăн **П. Т. ЗОЛОТОВ.**

Пĕр об'екта çакăн пек работниксем кирлĕ: продснаб начальникĕ, продснаб агенчĕ, продснаб бухгалтерĕ, склад заведующийĕ, завхоз, кассир-счетовод, механик, лаборатори заведующийĕ, инженер-строитель, техник-строитель, тимĕрçĕ. Çемьесĕр çынсене общежити, çемьеллисене хватттер параççĕ.
8 сехетрен пуçласа 12 сехетчен тата 13 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлмелле. Телефон: 6—02—икĕ звонок.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00515 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л. Тираж 14.490 экз.